Юратнă шкул
Эпĕ шкултa вĕренетĕп,
Кулленех унта çӳретĕп,
Вулама-çырма пĕлетĕп,
Лайăх паллăсем илетĕп.
Анастасия Ширтанова.
Шупашкар, 24-мĕш шкул.

Кушак
Манăн ялта кушак пур.
Антонина ятлă вăл.
Шăши тытать кашни кун –
Ах, маттур çав манăн вăл!
Саша Никитин.
Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.

Путек
Асаннемĕн путек пур,
Хăй вара вăл пит маттур:
Вылять, сикет, сĕт ĕçет,
Амăшне чунтан савать,
Çуркунне çитсен вара
Хĕвел ăшшинче вылять,
Мана курсан яланах
Савăнса чупса пырать.
Эпĕ ăна юратса
Çăкăр чĕлли паратăп:
«Ӳс эс, манăн пĕчĕк тус,
Çăм алсиш мана кирлех».
Милена Пояндаева.
Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.

Савăнăç
Ак вĕçленчĕ ăмăрту,
Савăнатпăр чĕререн.
Раççейри спортсменсемпе
Мухтанатпăр кашнинпех.
Настя Охтярова.
Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей.

Аттеçĕм
Ман юратнă атте пур,
Вăл ĕçчен те пит маттур,
Яланах патвар çӳрет,
Пур çĕре те ĕлкĕрет.
Иван Чиндарев.
Шупашкар, 24-мĕш шкул.

Саламлатăп
Çуралнă кунпа саламлатăп,
Ырлăх-сывлăх, телей эп сунатăп.
Лайăх эс пурăн, нихçан ан чирле,
Çуралнă кунпа – юратнă анне!
Ольга Григорьева.
Канаш, 5-мĕш шкул.

**Атте пек**
Аттене эп юрататăп
Патвар та вăйлă пулнăран.
Аттене эп хисеплетĕп
Мана яла нăс панăран.
«Эп те атте пек пулатăп», –
Тетĕп хамăн аннене.
«Аçу пек маттур эс пулăн», –
Хĕпĕртет маншăн анне.
**Александр Сергеев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Маçук**
Манăн пур кушак çури,
Шурă мамăк евĕрли.
Икĕ куçĕ шăрçа пек,
Вылять, сикет мулкач пек.
Юрататăп Маçука,
Савăнатăп тусăмпа.
**Дарья Кириллова.**
**Шупашкар, 56-мĕш шкул.**

**Физзарядка тăвар!**
Йĕркипе тăрса тухар,
Физзарядка халь тăвар:
– Сылтăм алă, сулахай,
Сылтăм ура, сулахай!
Эпир вăйлă та хастар,
Пит тĕреклĕ те патвар,
Пит маттур та пултаруллă,
Питре çиçет йăлтăр кулă.
Алла çĕклер çӳлелле,
Саламлар сар хĕвеле:
– Сылтăм алă, сулахай,
Сылтăм ура, сулахай!
Хĕвел çинче хĕртĕнсе,
Чупса, сиксе те ишсе
Çирĕп сывлăхлă ӳсер,
«Сывлăхлă пулас-ха», – тер.
Вырăнта тăрса утар,
Сывлăш çавăрса ярар.
Тăрар, ларар та тăрар,
Ывăнсан ларса канар.
Йĕркипе тăрса тухар,
Физзарядка халь тăвар:
– Сылтăм алă, сулахай,
Сылтăм ура, сулахай!
**Вика Леонтьева.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

**Çуркунне**
Чӳречерен пăхар-ха,
Çуркуннене курар-ха,
Вăл ирех паян кулать,
Урама тухма чĕнет.
Килсем, ăшă çуркунне,

Хавас кӳрсем эс пире,
Вăйă-кулă парнеле,
Кăмăла илем кӳрсем.
**Катя Кириллова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 3-мĕш шкул.**

Кушак
Манăн килте кушак пур,
Хитре икĕ куçĕ пур,
Хăйма çиме юратать,
Шăши хыççăн хăвалать,
Мана ирех вăратать,
Шкула каймаваскатать,
Питрен пырса чуп тăвать,
Хӳрипе вара шăлать.
**Анна Романова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Анне кулли
Анне кулли ялан илемлĕ,
Анне кулли пурне те кирлĕ.
Анне кулли ялан вăл пултăр,
Тăтăш ăшăтса вăл тăтăр.
**Ольга Исмаилова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Манăн тус
Манăн тусăм кушак пур –
Питĕ лайăх сунарçă.
Çăмĕ ун шупка кăвак,
Хӳри вĕçĕ – шап-шурă.
Кушак тусăм каçсерен
Ларать манпа юнашар.
Куçне хупсан ерипен
Юрлать мăр-мăр юррине.
**Александр Сергеев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Кукамай
Пит маттур ман кукамай,
Вĕрентет ĕçленĕ май,
Пушă вăхăт пур чухне
Алла илет тĕррине.
**Марина Карпилова.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Тав вĕрентекенсене
Куллен çӳретĕп эп шкула
Вĕренмешкĕн, ăс пухма.
Урокра ларап ялан,
Ăслă пулас килет ман.
Вĕрентекен каланине
Итлеп эпĕ тимлесех,
Вĕсем пире вĕрентеç,
Пысăк çынсем пулччĕр теç.
Çавăнпа эпир ялан,

Вĕренетпĕр тăрăшса.
Тав вĕрентекенсене –
Пуç таятпăр вĕсене.
**Андрей Табаков.**
**Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

**Спортпа туслă**
Сывă çын вăл ырă чунлă,
Ăслă шухăшлă, ĕçчен.
Спортпа та вăл питĕ туслă,
Чире çĕнтерет пĕччен.
Сывă çын вăл таса чунлă,
Илемлĕ те сăпай.
Спортсăр вăл пĕр кун та пулмĕ,
Тус-юлташ та ун нумай.
**Диана Соколова.**
**Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

**Мурка**
Килте манăн кушак пур,
Ячĕ унăн Мурка.
Вылямашкăн юратать,
Вăл хастар та... ашкăнать.
Кăнтăрла вăл çывăрать,
Каçхине шăши тытать.
**Андрей Табаков.**
**Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

**Анне**
Анне вăл хаклă çутă тӳперен!
Анне вăл хаклă çутă хĕвелтен!
Унăн куçĕсем çутатнă чух
Мĕнле лайăх пурăнма!
Анне тутисем кулнă чух
Пит аван ман чунăмра.
**Виктория Петрова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Паланпа чăрăш**
Çитрĕ сентябрь,
Саралчĕ вăрман.
Шăпланчĕ унта
Кайăк-кĕшĕк сасси.
Тăхăнчĕ кĕр тумĕ
Юратнă пахча.
Хурланчĕ палан
Çулçине тăкнăран.
Пачах шарламарĕ пĕр йывăç –
Ялан симĕс лăсăллă чăрăш.
**Оля Егорова**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

**Чăваш çĕрĕ – савнă çĕр!**
Чăваш çĕрĕ – савнă çĕр!
Эп санпа савăнатăп, кур!
Чăвашла калаçатăп, юрлатăп,

Сана мухтаса эп сăвă çыратăп.
Анлă Атăл, хирсем, улăхсем,
Вăрмансем, кӳлĕсем, çăлкуçсем.
Сан сăнна эп пăхса киленетĕп,
Пĕр санпа яланах мухтанатăп.
Чăвашсем, вырăссем, тутарсем,
Ытти тĕрлĕрен-тĕрлĕрен халăхсем.
Туслă пурăнар, пĕр-пĕрне пулăшар
Чăваш çĕрĕн ятне малалла та çĕклер!
**Валера Антонов.**
**Шупашкар, 7-мĕш вăтам шкул.**

**Кăмпара**
Кĕркуннехи вăрмана
Эп каятăп аттепе,
Шурă кăрăç, сар кăмпа
Пуçтаратăп тăрăшса.
**Дарья Илгошкина.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

**Вĕрентекенĕм!**
Вĕрентекенĕм хăмăр çӳçлĕ,
Тирпейлĕ, ăслă та хавас.
Вăл çепĕç саслă, хăмăр куçлă.
Эсир ялан ман чĕрере.
Тавтапуç сана, учитель,
Ăс панăшăн куллен пире!
**Анна Миронова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Пукане**
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,
Пукане эп ӳкеретĕп.
Пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр,
Сăрласа хитрелететĕп.
Акă алă, акă пуç,
Акă сăмса, акă куç.
Кĕпине капăрлататăп,
Хĕрлĕпе ăна сăрлатăп.
Пукане ман пит хитре,
Килĕшет вăл аннене,
Аттепе асаттене,
Асаннепе пиччене.
**Виктория Леонтьева.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази**

**Чуня**
Пирĕн ялта йытă пур,
Чуня ятлă, вăл маттур.
Çын килнине систерет,
Манпа вăрмана çӳрет.
**Степан Мышков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

**Кукамай**
Манăн Зоя кукамай

Пахчара ĕçлет пĕрмай,
Пахча-çимĕç ӳстерет,
«Хĕл хырăмĕ пысăк» тет.
Чечексем вăл юрататъ,
Тĕрлĕ тĕслине лартать,
Ирĕн-каçăн шăварать,
Хăшне-пĕрне чуп тăвать.
**Степан Мышков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

**Хĕл çитет**
Кĕркунне иртсе те кайрĕ,
Кун та самаях кĕскелĕ.
Шурă юр çума пуçларĕ,
Хĕл çитессине пĕлтерчĕ.
**Ольга Иванова.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

**Кушак çури**
Манăн пĕчĕк кушак пур,
Эпĕ ăна юрататăп.
Вăл лайăх, хитре, илемлĕ кушак –
Пысăклансан вăл маттур пулать.
**Лаура Семенова.**
**Шупашкар, 7-мĕш шкул.**

**Мулкач**
Ку – мулкач, вăл Тишка ятлă,
Питĕ лайăх вăл, таса.
Юратать вăл хĕрлĕ кишĕр
Тата шурă купăста.
**Юлия Алексеева.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

**Вĕрентекен**
Тавтапуç сире,
Тайма пуç сире,
Хаклă вĕрентекенсем!
Ыр сăмах калатпăр,
Питĕ кăмăллатпăр
Пĕрремĕш вĕрентекене.
Вăл питĕ ăслă та илемлĕ,
Кăвак куçлă, хăмăр çӳçлĕ.
Тавтапуç ăна пире ăс-тăн панăшăн –
Юрататпăр эпир пит ăна.
**Елизавета Сергеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Манăн анне**
Юратнă аннем!
Эсĕ манăн чи хитри,
Чи асамли, чи ырри!
Кăвак куçлă, йăрăс пӳллĕ,
Йăл куллу ытарайми.
Аннеçĕм, пурăн ĕмĕр –
Эсĕ маншăн чи хакли.

**Софья Мискачева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Вĕрентекен**

Сана эпĕ юрататăп,
Сана эпĕ хаклатăп,
Санпа эп мухтанатăп,
Сан пек пулма тăрăшатăп –
Ман юратнă вĕрентекен!

**Марина Степкина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 5-мĕш шкул.**

**Каникул**

Кĕçех пуçланаççĕ
Савăнăç кунсем,
Ăна юратаççĕ
Мĕнпур ачасем.
Шыва кĕме каяççĕ,
Ишеççĕ, канаççĕ.
Эпĕ те кĕтетĕп
Çу кунĕсене.
Эп вара шутларăм
Ăçта каяс тесе.
Малтан яла каятăп,
Кайран – лагере.
Лайăх ирттеретĕп
Çакă кунсене.
Кĕçех пуçланаççĕ
Савăнăç кунсем,
Ăна юратаççĕ
Пĕтĕм çынсем.

**Ангелина Андреева.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

**Çуркунне**

Çитрĕ ăшă çуркунне,
Савăнтарчĕ кашнине.
Вĕçсе килчĕç кайăксем –
Пирĕн шанчăклă туссем.

**Анастасия Антонова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

**Тăнăçлăх пурне те кирлĕ!**

Уй-хирте ÿсет сар тулă,
Кÿлĕре ишет çут пулă.
Ман питре ялан йăл кулă,
Пурăнсан çынсем татуллă.
Аннесем макăрмасассăн,
Ачасем  пытанмасассăн.
Çут тĕнче шар курмасассăн,
Çын çынна хур тумасассăн.
Сар хĕвел ялан çутаттăр,
Кайăк сасси янăратăр.
Урамра ача вылятăр,
Уй-хирте тыр-пул кашлатăр.
Лайăх пурнăç пире кирлĕ,

Пурӑнасчӗ пирӗн мирлӗ.
Кар тӑрса калар халь вирлӗ,
«Тӑнӑҫлӑх пурне те кирлӗ!»
**Миша Егоров.**
**Шупашкар, 1-мӗш гимнази**

**Ҫӗнӗ ҫул**
Кӗҫех Ҫӗнӗ ҫул ҫитет,
Кӗҫех Хӗл Мучи килет,
Сӑвӑ калама ыйтать,
Уншӑн парнесем парать.
**Настя Овчинникова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 13-мӗш шкул.**

**Хӗлле**
Сивӗ хӗл те ҫитрӗ,
Уйсене шур юрпа витрӗ.
Хӗле эп питӗ юрататӑп,
Ҫӗн ҫул уявне кӗтетӗп.
Кӗҫех Хӗл Мучи килет,
Мана парне парнелет.
**Настя Бастеева.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 13-мӗш шкул.**

**Шурӑ юр**
Урамра ҫӑвать
Шурӑ юр.
Лӑпкӑн вӑл ӳкет –
Тухса кур.
Илтӗм аллӑма
Чӑмӑркка.
Пулчӗ Юр пике
Капӑркка.
**Анастасия Эврикова.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 20-мӗш шкул.**

**Юр пӗрчи**
Шурӑ юр пӗрчийӗ
Ӳкрӗ ман ҫине.
Ҫепӗҫ ачашларӗ
Ӑш ал тупанне.
**Настя Петрова.**
**Шупашкар, 56-мӗш шкул.**

**Асанне**
Ман юратнӑ асанне
Пурӑнать кӳршӗ ялта.
Хамӑн канмалли кунта
Эп каятӑп ун патне.
Пулӑшатӑп эп ӑна
Шыв йӑтма, урай ҫума.
Юратать-ҫке вӑл мана,
Эп те юратап ӑна.
**Кукушкин Артем.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 16-мӗш шкул.**

**Шурă хĕл**

Пит килĕшет шурă хĕл:
Пур çĕрте те кăпăш юр,
Ача-пăча йĕлтĕрпе,
Çунашкапа, конькипе
Хĕпĕртесе ярăнать,
Хĕл Мучине тав тăвать.

**Аня Высоцкая.**
**Çĕмĕрле, 2-мĕш шкул.**

**Хĕлле**

Тăвайккинчен ярăнма,
Йĕлтĕрпе чупма
Юрататăп тусăмпа
Хĕллехи каникулта..

**Женя Васильева.**
**Шупашкар, 57-мĕш шкул.**

**Савăнăç**

Савăк туйăмпа тăратăп,
Юр выртать йĕри-тавра.
Кĕç уяв çитет, туятăп,
Килĕ савăнăç вара!

**Эрнест Слюсарь.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Хĕлле**

Кĕркунне иртсе кайрĕ,
Çитрĕ шурă хĕлле.
Кăпăш çемçе юр çурĕ –
Çунашка хатĕрле!

**Егор Константинов.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

**Юр çăвать**

Юр çăвать, юр çăвать,
Шурă, кăпăш юр çăвать.
Çилĕ çурçĕртен вĕрет,
Сивĕ питрен чĕпĕтет.

**Катя Николаева.**
**Шупашкар, 35-мĕш шкул.**

**Парне кĕтетĕп**

Сивĕ хĕл те çитрĕ,
Уйсене шур юрпа витрĕ.
Хĕле эп питĕ юрататăп,
Çĕн çул уявне кĕтетĕп.
Кĕçех Хĕл Мучи килет,
Мана парне парнелет.

**Настя Бастеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

**Сивĕ-сивĕ**

Пăхрăм эп чӳречерен,
Урамра сип-сив иккен,
Кайăксем те курăнмаççĕ,

Сивĕрен вĕсем хăраççĕ.
**Полина Орлова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Хавас мулкач
Хĕлле мулкач пит хавас –
Мĕншĕн кашкăртан хăрас?
Хĕл Мучи шур кĕрĕкне
Витсе янă ун çине.
**Андрей Гусев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Илемпи
Пур ман пĕчĕк пукане,
Ячĕ унăн – Илемпи.
Вылятать куçĕсене,
Кăвак тĕслĕ ун кĕпи.
Юратап Илемпине,
Юрлап сăпка юррине:
«Çывăр, пĕчĕк пукане,
Кур эс тутлă тĕлĕкне».
**Екатерина Агаськина.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Хĕлле
Урамра юр çăвать,
Манăн чунăм савăнать.
Эп васкатăп урама
Шурă юрпа выляма,
Ачасемпе савăнма,
Хĕл Мучи ăсталама.
Йăмăка та эп пĕрле
Илсе тухрăм урама,
Çунашкапа ярăнтарăп,
Юр пике те туса парăп.
**Катя Афанасьева.**
**Шупашкар, 35-мĕш шкул**

Хĕлле
Йĕлтĕр сыртăм та эп  тухрăм
Ярăнмашкăн урама.
Кăпăшка юр çийĕн кайрĕ
Йĕлтĕр хытă ярăнса.
**Максим Мизуров.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Чăрăш
Çурт умĕнчи чăрăша
Илемлетрĕм тăрăшса.
Çакрăм хитре теттесем,
Тĕрлĕ тĕслĕ хăюсем.
**Егор Князев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Шупашкар

Эпĕ Шупашкарта пурăнатăп,
Хамăн хулана эп юрататăп!
Хулам çамрăк, сумлă, вăйлă,
Халăхĕ хастар та туслă!
**Макар Иванов, Илья Бажаев.**
**Шупашкар, 7-мĕш шкул**

**Маня**
Пирĕн ялта Маня пур –
Шурă пуçлă качака.
Унăн икĕ путек пур,
Вĕсем питĕ маттурка.
Асатте ирпе тăрса
Тухать качака патне.
Маня вара савăнса
Парать тутлă ăш сĕтне.
**Дарья Мельникова.**
**Шупашкар, 41-мĕш шкул.**

**Юр пĕрчи**
Юр пĕрчи манпа вылять,
Шăппăн-шăппăн калаçать:
«Чуп-ха, Дима малалла,
Выляр хăваламалла».
**Дмитрий Разиньков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Каникулта**
Çĕнĕ çул та çитрĕ,
Ачасем каникулта:
Йĕлтĕрпе чупаççĕ,
Конькипе ярнаççĕ...
Вăхăт лайăх ирттереççĕ,
Шкулта аван вĕренме
Çирĕп вăй-хал пухаççĕ.
**Дарья Никифорова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Йĕлтĕрпе**
Ирпе-ирех эп паян
Йĕлтĕр сыртăм кăмăлтан.
Чĕнтĕм хамăн юлташа
Ярăнмашкăн ращара.
Юлташ мана курсанах
Хĕпĕртерĕ чунтанах.
Кунсерен эпир унпа
Ăмăртатпăр тăрăшсах.
**Игорь Алексеев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

**Аннене**
Пуринчен малтан тăрать,
Мана ăшшăн вăратать,
Унтан шкула ăсатать,
Ыртă сăмахсем калать.
– Пул эс, хĕрĕм, ырă, – тет, –

Нихӑҫан та ан ӳркен,
Туссем пулчӑр сан нумай,
Юлташсене ыр сунсан,
Ваттисене чысласан,
Ялан пулӑн эс телейлӗ.
– Тавтапуҫ сана анне,
Эс мана вӗрентнӗшӗн,
Эпӗ сана юрататӑп!
Эпӗ санпа мухтанатӑп!
**Камилла Кириллова.**
**Ҫӗмӗрле, 2-мӗш шкул.**

**Йӑмӑк**
Манӑн пӗчӗк йӑмӑк пур,
Унӑн пӗчӗк пуканийӗ пур.
Ӑна вӑл питӗ юратать,
Савӑнсах унпа вылять.
Апатне те ҫитерет,
Лӑпка-лӑпка ачашлать,
Юнашар та вырттарать.
– Ҫывӑр, хӗрӗм, ҫывӑр, – тет.
– Пулӑн эсӗ пысӑк, – тет.
**Игорь Алексеев.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 13-мӗш шкул**

**Анне**
Юрататӑп эпӗ аннене,
Вӑл ӑста, вӑл хитре.
Шӑнкӑрч юрри пек сасси,
Хӗвел ҫутти пек ӑшши.
**Егор Константинов.**
**Шупашкар, 64-мӗш шкул.**

**Анне мӗншӗн чи хакли?**
Анне мӗншӗн чи хакли,
Чи хитри те лайӑххи,
Ӗҫченни те чи ӑсли,
Чи хитри те чи кирли?
Мӗншӗн тесен эп туятӑп
Ун пысӑк юратӑвне,
Ҫавӑн пекех эп сисетӗп
Вӑл маншӑн тӑрӑшнине.
**Данила Питеркин.**
**Ҫӗнӗ Шупашкар, 20-мӗш шкул.**

**Манӑн анне**
Манӑн анне пит илемлӗ,
Юрататӑп эп ӑна.
Манӑн анне пит тирпейлӗ,
Хисеплетӗп эп ӑна.
**Камилла Пыркина.**
**Шупашкар, 35-мӗш шкул.**

**Аннеҫӗм**
Манӑн анне пит ӗҫлет,
Ирех пӑтӑ пӗҫерет.

Тутлă пăтă эп çиетĕп,
Тата ăшă сĕт ĕçетĕп,
Унтан шкула вĕçтеретĕп.
**Карина Ефимова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 4-мĕш шкул.**

Çуркунне
Çуркунне, çуркунне!
Шыв юхать çулваррипе,
Эпир карап яратпăр,
Çуркуннене саватпăр.
**Мария Волкова.**
**Çĕмĕрле, 1-мĕш шкул.**

Сивĕ
Питĕ сивĕ вăрманта та,
Урамра та, улăхра та.
Пур çĕрте те юр çăвать,
Чăрăшсем çинче выртать.
**Оля Никифорова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази**

Анне кунĕ
Уяв пулать çулсерен,
«Анне кунĕ» теç ăна.
Эпĕ хамăн аннене
Парнелесшĕн кĕлчечек
**Яна Иванова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

Элпи
Элпи – пĕчĕк хĕрача,
Вăл хитре, тирпейлĕ.
Унăн йытă, кушак пур,
Вĕсем пит телейлĕ.
**Арина Ефимова.**
**Шупашкар, 1-мĕш шкул**

Чун уççи
Хĕл кунĕнче, ир пулсассăн,
Кил картине тухсассăн,
Выльăхсем мана кĕтсе
Тăрса тухнă черетпе.
Виçĕ ĕни мăшлатса
Пырса тăнă шыв патне,
Сурăхĕсем сас парса
Кĕтеç утă парасса.
Сокол ятлă йăпăрĕ
Кукалесе ихĕрсен,
Кроликĕсем, шап-шурă,
Мана куçран тинкерсен
Кăмăл тулать, хĕпĕртет –
Вĕсене пăхас килет.
**Марина Семенова.**
**Йĕпреç районĕ, Чăрăшкасси**

**Çуркунне**
Вĕçсе килчĕç шăнкăрчсем
Хăйсен тăван çĕршывне.
Питĕ хитре сассипе
Шăрантараç юррине.
Çурăлаççĕ çеçпĕлсем,
Йывăç-курăк чĕрĕлет.
Çак илемлĕ вăхăтра
Савăнатăп чĕререн.
**Вероника Васильева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

**Кушакăм**
Манăн килте кушак пур,
Вăл хитре те пит маттур,
Çăмĕ шурă, пит хўхĕм,
Мăрлатать вăл пит чее.
Вылять, чупать манпала
Юрататăп эп ăна!
**Анастасия Александрова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 19-мĕш шкул**

**Сивĕ**
Питĕ сивĕ вăрманта та,
Урамра та, улăхра та.
Пур çĕрте те юр çăвать,
Чăрăшсем çинче выртать.
**Оля Никифорова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази**

**Шур качака**
Пирĕн шурă качака
Вăл мана итлет,
Эпĕ унпа пĕрмаях
Выляма çўреп.
Вăл та хĕпĕртет мана,
Эп шкултан килсессĕн.
Аннепе ялан ăна
Эпĕ сума тăрăшап.
**Виктория Афанасьева.**
**Шупашкар, 7-мĕш шкул**

**Çуркунне**
Акă çитрĕ çуркунне,
Килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Сар хĕвелĕ йăл кулать,
Ачасене саламлать.
Юр ирĕлет васкаса,
Çырмасенче шыв юхать.
Вĕçсе килчĕç кайăксем,
Ячĕç юрă юрласа.
**Марина Петрова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 10-мĕш шкул**

**Туслă çемье**
Эпир виççĕн савăнатпăр,

Юрă юрлатпăр, юрă юрлатпăр:
Атте, анне тата эпĕ –
Пирĕн туслă çемье.
**Виктор Луков.**
**Шупашкар, 35-мĕш шкул.**

**Атте-анне**
Атте те, анне те пур манăн,
«Пирĕн хĕрĕм» теç мана.
«Лайăх вĕрен, ăслă пул», –
Вĕрентеç  куллен мана.
**Кира Тимофеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

**Кăсăя тусăм**
Кантăкран шаккать такам.
– Кам унта? Пырса пăхам!
Манăн тусăм кăсăя:
– Апат пар-ха, – тет мана.
**Софья Муллина.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Кĕçех**
Кĕçех çитĕ çуркунне,
Вĕçсе килĕç кайăксем.
Вĕсем валли вĕллесем
Хатĕрлесчĕ тăрăшса.
**Даниил Гвоздев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

**Асаттем килмерĕ вăрçăран …**
Асаттем килмерĕ вăрçăран –
Хĕрĕх пĕрмĕш çултах пуçне хунă.
Инçех мар халь выртать Мускавран,
Паттăрла вилĕмпе куçне хупнă.
Çакă юнлă пынă çапăçу
Ман тăван çĕр-шывăн тĕп хулишĕн.
Ват Раççейĕм тӳснĕ çухату
Çут пуласлăхшăн та çирĕп миршĕн.
Выртса юлнă вăрçă хирĕнче
Пурнăçа чунтан юратнăран-ши?
Тăван килĕ пулнă чĕринче,
Çавăнпа нихçан та парăнман-ши?
Асаттеçĕм вилнĕ вăрçăра,
Тĕп хуламăра хӳтĕлесе-çке!
Асилетпĕр паттăр салтака
Чун ыратăвне, хуйха сирсе çеç …
Çитмĕл çул та иртрĕ унтанпа –
Çĕнтерӳ кунне халь уявлатпăр!
Ир те каç усал тăшмансенчен
Асатте пек çĕр-шыва сыхлатпăр!
**Даниил Тимофеев.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул**

Çитрĕ ăшă çуркунне,
Савăнтарчĕ кашнине.

Вĕçсе килчĕç кайăксем –
Пирĕн шанчăклă туссем.
**Анастасия Антонова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 19-мĕш шкул.**

Эпĕ спортпа питĕ туслă
Ишме, кĕрешме çӳреп.
Çĕнтереп ăмăртура,
Савăнтарап тренера.
**Максим Мизуров.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Çитрĕ кĕтнĕ çуркунне:
Хĕвел сапать çуттине,
Кайăксем юрлаç юррине,
Савăнтараç ачасене.
**Дарья Кириллова.**
**Шупашкар, 56-мĕш шкул.**

Тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем
Вĕçсе килчĕç кăнтăртан.
Вĕсем валли ачасем
Йăва тунă кăмăлтан.
**Маркел Расьев.**
**Шупашкар, 24-мĕш шкул.**

Кĕçех çитĕ çуркунне,
Вĕçсе килĕç кайăксем.
Вĕсем валли вĕллесем
Хатĕрлесчĕ тăрăшса.
**Даниил Гвоздев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

Эп çуллана юрататăп,
Ирхине сада тухатăп.
Хитре юрлаççĕ кайăксем,
Куç  хĕсеççĕ чечексем!
**Екатерина Фролова.**
**Çĕмĕрле, 1-мĕш шкул**

Шăнкăрч килчĕ васкаса
Юратнă Тăван çĕр-шывне,
Савăнтарчĕ çынсене
Хăйĕн илемлĕ кĕввипе.
**Екатерина Трофимова.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**

Эпĕ ялта пурăнатăп,
Хамăн яла юрататăп!
Вăл пирĕн çамрăк, вăйлă,
Халăхĕ хастар та туслă!
**Кристина Маркова.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул.**

Тухрăм каçпа урама,
Тупрăм хамăн çăлтăра.

Чĕнчĕ мана выляма,
Ырлăх чĕртрĕ чунăмра.
**Элла Мартьянова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Автан
Хĕвелтен те маларах
Вăранать пирĕн автан.
вăратать хуçисене
Кил хушшинче ĕçлеме.
Хĕвел тухса çитсенех
Илсе тухать чĕпписе,
Çуначĕсене сарсах
Сыхлать хăйĕн çемйине.
**Юля Плечова.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Пулăра
Пирĕн ялта кӳлĕ пур,
Унта çупах, карас пур.
Аттен пĕчĕк вăлта пур,
Ман витрере çăрттан пур.
Киле çитрĕм васкаса,
Патăм витре аннене.
«Маттур», – терĕ савăнса,
Ăшшăн кулса аттене.
**Карина Федорова.**
**Шупашкар, 35-мĕш шкул.**

Каникул
Çуллахи каникул çитрĕ –
Пурте савăнаççĕ!
Ачасем шывра ишеççĕ,
Кайăксем хитре юрлаççĕ.
**Яна Яковлева.**
**Канаш, 3-мĕш шкул**

Сетнер
Сетнер çитрĕ шыв хĕрне
Хăйĕн юланучĕпе.
Чунран кĕтет Нарспине –
Хăйĕн чунĕ савнине.
**Максим Горбачев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 10-мĕш шкул**

Манăн ĕмĕт
Манăн ĕмĕт пысăк мар,
Çав тери пĕчĕк те мар.
Йыт çури çинчен шутлатăп,
Тĕлĕкре çаплах куратăп.
**Степан Мышков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 19-мĕш шкул**

Тухрăм эпĕ урама
Юлташсемпе выляма.
Тупаймарăм никама

Лартăм уроксем тума.
**Игорь Романов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Юратнă анне**
Хитре куçсем, хитре алсем,
Ку ман анне – чунра илем.
Инкек пулсан вăл пулăшать,
Ыр чунĕпе мана савать,
Чирлесен пăшăрханать,
Эмелсем мана парать,
Курăкпа та сыватать,
Маншăн питĕ кулянать.
Пурнăç панă вăл мана,
Ӳстернĕ юратса, савса.
Нихçан та манмăп эп ăна,
Вăл пурнăçра пĕрре кăна.
**Андрей Романов.**
**Канаш, 6-мĕш шкул**

Чи илемлĕ, чи хитре
Ман юратнă асанне.
Кукăльне те пĕçерет,
Ăслă пулма вĕрентет.
**Дарья Матвеева.**
**Шупашкар, 37-мĕш шкул.**

Кишĕр, çарăк, купăста
Ӳстеретпĕр тăрăшса.
Манăн ĕç те пур кунта –
Шăваратăпваскаса.
**Ирина Иванова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей**

«Нарспи» ятлă хайлава
Эп вуларăм  юратса.
Константин Иванова
Упрасчĕ яланах чунра.
**Веня Яскей.**
**Çĕмĕрле районĕ, Турханти пуçламăш шкул**

**Урокра**
Чăваш чĕлхи урокĕнче
Калаçатпăр чăвашла,
Вулатпăр та çыратпăр,
Ӳкерчĕксем сăрлатпăр
Сăвăсемпе калавсем
Калăплатпăр тăрăшсах.
**Вова Васильев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул**

**Юланутăм, юланут...**
Юланутăм, юланут
Эс манпа пĕрле халь ут!
Эп сана ак йĕнерлерĕм,
Сан çинче ларса çӳрерĕм.

Ылтăн çилхе, кăвак куç,
Хушка пуçлă манăн тус,
Эп ăна пит юрататăп,
Ачашлатăп та лăпкатăп.
Вăл та мана юратать,
Ăслă куçĕпе пăхать.
Мана сăмсипе тĕкет,
Сахăр парасса кĕтет.
**Никита Леонтьев.**
**Шупашкар, 1-мĕш гимнази.**

Кушак мана юратать,
Хăй ачашшăн мăрлатать.
Ман çумалла сĕртĕнет,
Тутлă аш-какай кĕтет.
**Мария Майкова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Пурнăç иртет шавласа,
Ир пулать те, каç пулать.
Кунсем хăвăрт иртнипе
Пурăнни те туйăнмасть.
**Юрий Лукин.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул**

**Ман кукамай**
Аслă Тăрмăш ялĕнче
Ман кукамай пурăнать,
Хăйĕн пысăк пахчинче
Кунĕн-çĕрĕн тăрăшать.
Кишĕр, çĕрулми, сухан
Йăран çинче ӳсеççĕ.
Улма-çырла йывăççи
Сад пахчинче лараççĕ.
**Денис Федоров.**
**Канаш, 10-мĕш шкул**